«Тилли юррисем» тата «Савни» ятлă икĕ кĕнекĕре темиçе кун кайрах илтĕм. Юлашки вуникĕ çул хушшинче пĕртте чăвашла кĕнеке курман эпĕ тата чăваш литературин ĕçĕсене тытăнма ниепле те пултарайманччĕ. Çав тĕлĕшрен эсир янă кĕнекесем ман валли пит юрăхлă пулать; манăçа тухасса çывхарнă чавашла пĕлĕвĕмсене чĕрĕлтерет пуль. Сире чĕререн тав тăватăп.

Кĕнекесенче çырнă сăмахсем те кăмăла каякан. Кĕнекесене вуласа тухсассăн паллаштарма тăрăшăп. Йăнăшмастăп пулсан, эсир кăçал утмăл çул тултарăр. Статья çырассине майлă мел пулать тесе, хăвăр çинчен тата произведенийĕрсем çинчен кĕскен çырассăра кăмăлпа ыйтатăп. Мĕншĕн тесен, сирĕн çинчен анчах Большая Сов. Энциклопедияра кăтартса панă хыпарсем пур манра; произведенийĕрсен хушшинче сирĕн шухăшпа хăшсем пахаллăрах пулнине пĕлессĕм те килет.

Çакăнпа хамăн çырăва вĕçлетĕп.

Сывă пулăр.

Пысăк салампа

JOHANNES

BENZING.

Асăрхаттару: авторăн чĕлхе уйрăмлăхĕсене тата орфографине улăштармасăр хăварнă.